Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

83-84 (7937-7938) №№ ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи октябрь (юпа) уйăхĕн 22-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Тутлă апат çитереççĕ

Коллективсенче



*Республикăри Министрсен Кабинечĕ 2012 – 2020 çулсем валли «Сывлăха сыхлас ĕçе аталантарасси» патшалăх программине йышăннине пирĕн общество аталанăвĕн черетлĕ утăмĕ темелле. Ăна пурнăçа кĕртме уйăракан укçа-тенкĕпе тĕллевлĕ усă курассинче сывлăх учрежденийĕсенче ĕçлекен кашни специалистăн тӳпи пур. Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ больницăн поварĕсем те хăйсен ĕçĕнче ответлăха туйса вăй хураççĕ. Людмила Михайловна Мышевăн (сăн ӳкерчĕкре сулахайри) повар стажĕ 1984 çултанпа. Виçĕ ывăл çуратса ӳстернĕ хĕрарăм пĕрле 2-мĕш çул ĕçлекен Галина Витальевна Романовăпа чирлисене те, больница ĕçченĕсене те яланах тутлă апатпа тивĕçтереççĕ.*

*А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

## «Тĕп ыйту – вĕрентӳ пахалăхне ӳстересси»

Пирĕн интервью

***2011 çулта вĕрентӳ системине аталантарма патшалăх 20 миллиард тенкĕ уйăрнă. Кун пекки темиçе вунă çулах пулман-ха. Апла пулсан патшалăх вĕрентӳ сфери çине пысăк тимлĕх уйăрни куç кĕрет. Хальхи вăхăтри инфраструктурăна туса хурасси, экономикăн вăйлă механизмĕсене ĕçлеттересси, пултаруллă педагогсене, вĕренекенсене хавхалантарасси тата пулăшасси – çаксем пĕтĕмпех çĕр-шыв экономикине инновациллĕ пĕр тăнăç аталану çулĕ çине илсе тухма пултаракан çĕнĕ ĕрăва ӳстерме пулăшаççĕ.***

***Çакăн пек условисенче пирĕн республикăри вĕрентӳ сфери мĕнле аталанĕ? Шăпах çакăн пирки калаçăпăр та паян Чăваш Республикин вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министрĕпе В.Н. ИВАНОВПА.***

**– Владимир Николаевич, Чăваш Ен çĕр-шывра вĕрентӳ енĕпе яланах малтисен ретĕнче пулнă. Пирĕн республика ыттисенчен маларах вĕрентӳ системин модернизаци ыйтăвĕсене комплекслă татса парассипе ĕçлеме пуçларĕ. Пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене, вĕрентӳ учрежденийĕсене оптимизацилессипе, профильлĕ вĕрентĕве тата аслă классенчи ун уменхи вĕрентĕве, пуçламăш сыпăкра тĕн культурин никĕсĕсемпе чиркӳпе çыхăнман этикăна пурнăçа кĕртессипе тата ыттипе те пилотлă регион пулчĕ. Паян мĕнле улшăнусем пулса иртеççĕ?**

– Вĕрентӳ системине малалла аталанма паян лару-тăру лайăхланса пырать. Республикăри пĕтĕмĕшле вĕрентӳ системин малашнехи модернизацийĕпе Чăваш Енре комплекслă мерăсем йышăннă. Вĕсем учительсен ĕç укçине ӳстерме, çамрăк специалистсене шкула явăçтарма, ачасене пахалăхлă вĕрентӳпе тивĕçтерме, вĕрентӳ учрежденийĕсенчи пурлăх базине çĕнетсе çирĕплетме тата учительсемпе шкул директорĕсен квалификацине ӳстерме май параççĕ. Çапла вара 2011 çулта çак ĕçсене пурнăçлама пурĕ 408 миллион тенкĕ уйăрнă, вĕсенчен 134 миллион тенкĕ – ĕç укçине ӳстерме. 2011 çулта вăл пĕтĕмĕшле илсен 30 процента яхăн ӳсмелле.

Çапла вара Чăваш Ен историйĕнче пĕрремĕш хут учительсен ĕç укçи экономикăри ĕç укçин вăтам кăтартăвĕнчен пысăкрах пулĕ – 13900 тенкĕне яхăн (2011 çулхи экономикăри ĕç укçин вăтам кăтартăвĕн 106 проценчĕпе танлашать). Уйрăммăн тата акă мĕн палăртмалла: республика ертӳçисем учительсен ĕç укçине кăна мар, психолог педагогсен, социаллă педагогсен ĕç укçине те, питĕ пĕлтерĕшлĕ – воспитательсемпе ача сачĕсенче вăй хуракан педагогсен ĕç укçине ӳстерме те майсем тупрĕç.

Республикăра пултаруллă та хастар педагогсене яланах активлă пулăшса пынă. «Вĕрентӳ» нацпроект пурнăçа кĕнипе пирĕн 700 педагог ытла тĕрлĕ конкурс çĕнтерӳçисем, Раççей тата Чăваш Ен Президенчĕсен премийĕсен лауреачĕсем пулса тăчĕç. Нумай пулмасть пирĕн президент М. Игнатьев ятарлă указа алă пусса çирĕплетрĕ. Унпа килĕшӳллĕн республикăри «Чи лайăх учитель», «Чи лайăх воспитатель» тата «Чи лайăх класс ертӳçи» конкурссен çĕнтерӳçисене Чăваш Республикин пуçлăхĕн хавхалантару укçине тивĕçессĕ: 150 пин тенкĕ, 100 пин тенкĕ тата 50 пин тенкĕ.

Шкулсене çĕнĕ оборудованипе тивĕçтерессин активлă тапхăрĕ пырать. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнипе пĕрлех шкул автобусĕсен паркĕ те пуянланчĕ. Учитель кунĕнче республика президенчĕ 34 шкула çĕнĕ автобус усçине пачĕ. 2011 çулта вара пĕтĕмĕшле 64 автобус туянма палăртса хунă. Пуçламăш классене вĕрентекенсен ĕç вырăнне автоматизацилеме Чăваш Ене пурĕ 700 комплект оборудовани килсе çитмелле. Тĕп шкулсем компьютер техникипе, шкул библиотекисем художество литературипе пуянланĕç.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

## Пурнăçлани курăмлă, тĕллевсем татах та пысăк

Республикăра

**Октябрĕн 18-мĕшĕнче Правительство çуртĕнче Чăваш Республикинчи пурăнмалли çурт-йĕр патшалăх инспекцийĕн ĕç-хĕлне çутатакан пресс-конференци иртрĕ. Пресс-конференцие районсенчи тата республикăри массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсем, ытти ответлă ĕçченсем хутшăнчĕç. Унăн ĕçне Чăваш Республикин Президенчĕн канашлуçи Н.И. Володина ертсе пычĕ, тĕрлĕ ыйту хускатрĕ. Пресс-конференцие хутшăннисене республикăри пурăнмалли çуртйĕр патшалăх тĕп инспекторĕ И.Г. Никитин ку тĕлĕшри пĕтĕмĕшле лару-тăрупа паллаштарчĕ.**

Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн 2002 çулта республикăра Чăваш Республикин çурт-йĕр патшалăх инспекцине йĕркеленĕ. Инспекци çине пысăк тивĕç тиеннĕ: пурăнмалли çурт-йĕр фончĕн ĕç-хĕлне тĕрĕслесси, коммуналлă пулăшупа тивĕçтерессинче граждансен саккунлă интересĕсене туллин хӳтĕлесси. Çынсен интересĕсене хӳтĕлес тĕллевпе инспекци планпа пăхнă, прокуратура тата республика ертӳçи сĕннĕ тĕрĕслевсене ирттерет, çынсене хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнать.

Паянхи кун тĕлне республикăра 10233 нумай хватерлĕ çурт, вĕсенчи пĕтĕмĕшле калăпăш 15 миллиона яхăн тăваткал метр. Пĕтĕмĕшле илсен нумай хватерлĕ çуртсене тытса тăрассипе ертсе пыракан компанисем (паянхи кун тĕлне республикăра 130), юлташлăхсем (498), çурт-йĕр кооперативĕсем (60) ĕçлеççĕ. Хваттере ăшăпа тивĕçтерессипе, çуртйĕр çивиттине юсасси, çĕнĕрен тăвасси, пăрăхсене улăштарасси, юсасси тата ку тĕлĕшри хăш-пĕр ĕç вĕсем çине тиенĕ.

Кăçалхи тăхăр уйăхра инспекци граждансем сырнă 2244 ыйтăва пăхса тухнă. Çынсен интересĕсене хӳтĕлес тĕллевпе планпа пăхнă 428, прокуратура ĕçченĕсемпе 159 тĕрĕслев ирттернĕ. Çавна май ситменлĕхсене тупса палăртнă, çурт-йĕр организацийĕсен тĕлĕшпе 839 предписани, административлă майпа (933, 2 пин тенкĕлĕх ) йĕркене пăснăшăн 133 протокол çырнă. Хăш-пĕр ертсе пыракан компанисен, юлташлăхсен ертӳçисене явап тыттарма тивнĕ.

(Вĕçĕ 4-мĕш стр.)

## Çыру: мĕн сĕнетĕр?

Михаил Игнатьев Президент ЧР Патшалăх Канашне тата халăх патне çулсерен яракан Çырăва хатĕрлеме пуçланă. Пысăк пĕлтерĕшлĕ çак документра вăл правительствăн, парламентăн, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, предприятисемпе организацисен ĕçĕн кĕске тата нумай вăхăтлăх стратегийĕн программине йĕркелеме ситĕнӳсемпе пĕрлех çивĕч ыйтусене те усăмлăн палăртĕ. Çырăва хатĕрленĕ чухне республика пуçлăхĕ Чăваш Ен халăхĕн, общество организацийĕсен, граждан обществин ытти институчĕн шухăш-кăмăлне те шута илĕ.

Çынсен пурнăç шайне ӳстерес тесен пирĕн пĕрле мĕнле тĕллевсем палăртмалла? Чăваш Ен Президенчĕн мĕнле темăсене тĕплĕнрех тишкермелле? 2012 çулхи Çырăва эсир мĕн кĕртме сĕнетĕр? Сирĕн шухăшăрпа пурнăçа мĕн лайăхрах, хăтлăрах, меллĕрех тăвĕ? Сĕнĕвĕрсене çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 10-мĕш çурт; e-mail, analit2@cap.ru. «Çырăва хатĕрлеме» тесе палăртмалла. Тел.: 39-35-73, 39-35-75.

Çĕр улми пуссисенче

## Пĕр кунта – 27 гектар

Районти хуçалăхсенче тĕп ĕçсем çĕр улми пуссисенче сарăлнă. Ĕнерхи кун тĕлне «иккĕмĕш çăкăра» пĕтĕмпе 1188 гектар çинчен (92,4 процент) кăларса пухнă. Юлнă лаптăк – 97 гектар. Пĕр кун хушшинче ăна 27 гектар çинчен пухса илнĕ. «Свобода» хуçалăхра пухса кĕртмен лаптăк 17 гектар, «Ударник» хуçалăхра 25 гектар, Чапаев яч. хис. хуçалăхра 2 гектар, «ВаСем» обществăра 30 гектар, «Картофель» агросоюзра 3 гектар, «Бездна» обществăра 12 гектар, С.К. Сретинскийăн, В.В. Бархаткинăн, В.В. Горбуновăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 1-4-шар гектар. Тухăç пĕр гектар пуçне вăтамран – 121,1 центнер. Çĕр улми пуссисенче 24 копалкăпа 10 комбайн ĕçленĕ. Пахча çимĕçе 170 гектар çинчен (74,7 процент) пуçтарса илнĕ. Пĕр гектар пуçне тивекен вăтам тухăç – 179,6 центнер.

Çĕртме 3639 гектар сухаласа хăварнă.

Жеребьевка

Объявление о проведении жеребьевок по распределению бесплатных и платных печатных площадей, предоставляемых газетой «Çĕнтерӳ ялавĕ» для предвыборной агитации при проведении выборов депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации шестого созыва, выборов депутатов Государственного Совета Чувашской Республики пятого созыва, дополнительных выборов в органы местного самоуправления в Чувашской Республике

| | |
|---|---|
| Выборы депутатов Госдумы ФС РФ | Жеребьевка на бесплатной основе проводится ЦИК Чувашии |
| | Жеребьевка на платной основе проводится 1 ноября 2011 г. в 10.00 часов в редакции газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д. 9 а, кабинет главного редактора |
| Выборы депутатов Госсовета ЧР Дополнительные выборы в органы местного самоуправления в ЧР | Жеребьевка на бесплатной и платной основе проводится 26 октября 2011 г. в 10.00 часов в редакции газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д. 9 а, кабинет главного редактора |

На жеребьевку приглашаются зарегистрированные кандидаты или их доверенные лица, уполномоченные представители избирательных объединений, выдвинувших зарегистрированный список кандидатов. Результаты жеребьевки будут оформлены протоколом. Печатная площадь предоставляется на основании договора, заключенного после проведения жеребьевки. Справки по телефону 62-1-36.

Саламлатпăр



Хаклăран та хаклă, юратнă аннене, çепĕç чунлă асаннене, ытарайми кукамая, тăвана – Çармăçкасси ялĕнче пурăнакан, 70 çулхи юбилейне паллă тăвакан **Вера Антоновна ЯГОДКИНĂНА** чун-чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн питĕ пысăк телей. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Эпир сана юрататпăр, эсĕ пуррипе савăнатпăр. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр.

**Салампа: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**



Юратнă мăшăра, хисеплĕ аннене, хаклă асаннене – Сарчак ялĕнче пурăнакан **Любовь Ивановна ВОЛКОВĂНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Сирĕн сывлăх, иксĕмли телей сунатпăр.Телейпе ăнăçу яланах санпа пĕрле пулччăр, ĕмĕтсем çитсе пычччăр. Пуринчĕн те сана çĕре çити пуç тайса тав сăмахĕ калатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.**



Юратнăран та юратнă, хаклă мăшăра, йăмăка, акие – Шомик ялĕнче пурăнакан **Таисия Николаевна ПАРИКОВĂНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Яланах хаваслă та ырă, чунупа çамрăк пул. Эпир сана юрататпăр, эсĕ пуррипе савăнатпăр. Сирĕп сывлăх та иксĕмли телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Çывăх тăванусем яланах сана савăк кăмăлпа парнелеччĕр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, аппăшĕсемпе пиччĕшĕсем, вĕсен ачисем, çывăх тăванĕсем.**

# «Ачасем те ответлăх пирки пĕлччĕр»

## «Полици тата ачасем»



Çапла пĕлтерет полици майорĕ И. Петров участковăй **(сăн ӳкерчĕкре)** Катькасри пуçламăш шкул-ача садĕнчи шăпăрлансемпе тĕл пулнă май.

Октябрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн республикăра пĕр уйăха тăсăлнă «Полици тата ачасем» профилактика акцийĕ вĕçленет. Паянхи кунччен акă полицин çул çитменнисемпе ĕçлекен сотрудникĕсем, участковăйсем тата çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторĕсем районти 22 вĕрентӳ учрежденийĕнчи чылай тĕл пулăва хутшăнма ĕлкĕрчĕç ĕнтĕ. Ачасене йĕркене пăсассинчен асăрхаттарасси вĕсен тĕп задачи пулса тăрать. Çапла вара ашшĕ-амăшĕсемпе тата педагогсемпе пĕрлех ачасен ответлăх туйăмĕ хăйсем тăвакан ĕçсемшĕн яваплăх пулмаллине полицейскисем те вĕрентеççĕ. Вĕсем вырăнсенчи профилактика канашĕсен ларăвĕсене те тăтăшах хутшăнаççĕ.

«Акци вăхăтĕнче паянхи кунччен 1 ачана учета илме тиврĕ, 3 ашшĕ-амăшĕ çине хăйсен тивĕçне йĕркеллĕ пурнăçламанран протокол çыртăмăр, – пĕлтерет В.В. Алексеев, Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн çул çитменнисемпе ĕçлекен уйрăмăн ертӳçи. – Ку районта ирттернĕ профилактика операцийĕн пĕтĕмĕшле кăтартăвĕ мар, паллах».

Ачасем хăйсене хăрушсăрлăхра туясси пирĕнтен, аслисенчен, нумай килет. Уйрăмах çул-йĕр çинче. Çавăнпа та ачасене пĕчĕкренех йĕркене пăхăнма, çапла майпа хăрушлăха асăрхаттарма вĕрентесчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**


**ЛЕНИНГРАДСКОЕ ЧУДО - ЛЕКАРЬ «НЕВОТОН"**

**Счастье-это быть здоровым. Вы согласны? Ибо без здоровья нет сил радоваться жизни. И даже для счастья в личной и семейной жизни, и успеха в работе, нам непременно нужно здоровье! Как его обрести знают те, у кого есть эти приборы, творящие волшебство.**

**НЕВОТОН-**физиотерапевтический прибор. Он образует вокруг себя особое магнитное поле, которое действует на очаг болезни, в результате чего клетки больного органа активизируются, самоочищаются, избавляются от шлаков, улучшается их насыщение кислородом. Такое воздействие обеспечивает улучшение текучести крови, расширение сосудов, нормализацию питания сердечной мышцы и снижение артериального давления. Уходят головные боли, нормализуется общее самочувствие: нет больше шума в ушах и мушек перед глазами. Ощущается общий прилив сил. Прибор вешают на шею или крепят на больное место на 1-6 часов (затем можно перенести на другое место) и носят до выздоровления. Полный курс 3-4 недели.

Безопасен, не вызывает передозировки и побочных эффектов. Им можно пользоваться и детям и взрослым. Надежен: будет служить Вам не менее 5 лет. Более того, одним прибором могут пользоваться несколько человек и его свойства при этом не ухудшаются.

**НЕВОТОН**- Магнитный биокорректор, получивший патент и лицензию Минздрава РФ. Министерство официально утвердило перечень заболеваний, которые лечит **НЕВОТОН.**

**Сердечно-сосудистую систему-** гипертония, ишемия, стенокардия, вегетососудистая дистония, сердечный приступ, постинсультное состояние, варикозное расширение вен, тромбофлебит, отеки.

**Опорно-двигательный аппарат** остеохондроз, радикулит, болезни суставов, артриты, артрозы, вывихи. **Неврологические и нервно-психические** расстройства, болевые синдромы, утомляемость, головные боли, стрессовые состояния, неврозы, нарушения сна, хроническая усталость.

**Мочеполовую систему** – мочекаменная болезнь, цистит, импотенция, фригидность, простатит, аденома предстательной железы, воспаление женских половых органов, нарушения цикла, мастит, мастопатия, фибромиома матки.

**Дыхательную систему** – ангина, хронический бронхит, насморк, бронхиальная астма, аллергия.

**Цена 1350р.**

**Пенсионерам, Ветеранам скидка!**

**ВЫСТАВКА-ПРОДАЖА СОСТОИТСЯ:**

**25 октября с 13 до 14 часов в РДК**

**ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ, ТРЕБУЕТСЯ КОНСУЛЬТАЦИЯ СПЕЦИАЛИСТА**

**СЛУХОВЫЕ АППАРАТЫ**

**цифровые, заушные, карманные от 3000 до 12 000 руб.**

комплектующие: **батарейки, шнуры, вкладыши**

**ВЫСТАВКА-ПРОДАЖА СОСТОИТСЯ:**

**25 октября с 13 до 14 часов в РДК**

***ПЕНСИОНЕРАМ, ВЕТЕРАНАМ - СКИДКИ !!!***

**КВАНТОВЫЕ ОЧКИ ПАНКОВА**

**улучшают лимфатический дренаж глаз и внутренних органов на 40% (миокард, печень, почки, бронхолегочная система, кожа, пищеварительный тракт) методика магнитолазерной терапии.** **Рекомендуются при:** **катаракте, глаукоме, атрофии зрительного нерва, амблиопии, астигматизме, гиперметропии, дистрофии сетчатки, косоглазии; близорукости . Цена 4500 руб.**

**ВЫСТАВКА-ПРОДАЖА СОСТОИТСЯ**

**25 октября с 13 до 14 часов в РДК**

**ПЕНСИОНЕРАМ, ВЕТЕРАНАМ - СКИДКИ!!!**


## Тав тăватпăр

Тивĕш ялĕнче пурăннă пирĕн юратнă ывăлăма, мăнукăма Максим Артемович Кузьмина юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пайланăшăн «Незабудка» садик ĕçченĕсене, тăвансене, ял-йыша, пускилсене чĕререн тав тăватпăр.

**Кузьминсен, Семеновсен çемйисем.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:060201:173, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:060201, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 2000 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:020202:629, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, с. Ильинка, ул. Дачная, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 524 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:071001:149, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:071001, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5822 кв.м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 3-5.**

**Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, бетон, торф, чернозем. С доставкой. Скидки. Тел.: 8-927-668-70-15. 8-13.**

**В Москву требуются фасовщицы, грузчики. Жилье, питание – бесплатно. З/п 30000 руб. Тел.: 8(8352)36-42-92, 36-42-94. 1-5.**

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ от 3000 руб. Установка, гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 3-12.**

В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы,грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады). Питание, проживание предоставляются. Вахта 15/15, 20/20, 30/15, 30/30, 60/30. З/п от 25000 руб. (сдельная). Тел.: 8(8352)23-22-22. **2-5.**

**БЕТОН, РАСТВОР любых марок.**
**Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.**
**Песок, ОПГС (гравмасса), щебень.**
**Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.**
**Доставка миксерами, самосвалами. 38-50.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Приглашаем всех, кого интересует дополнительный заработок. Возможность совмещать с любой работой. Возраст и образование значения не имеют. Звонить по тел.: 8-960-310-01-29, 8-927-850-18-58. 5-5.**

* * *

**Куплю дом в с. Моргауши и в ближайших деревнях. Тел.: 8-927-255-12-05. 1-2.**

* * *

**Продаем комбикорма. Тел.: 8-927-843-52-40. 5-5.**

* * *

**Тăхăр уйăхри хура-шурă тынашка усрама сутатпăр. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-952-021-99-87. 2-2.**

* * *

**Продаю автомобиль ВАЗ-2107, 2002 года выпуска. Цвет белый, газ+бензин. Состояние хорошее. Цена договорная. Тел.: 8-987-667-10-44.**


**пластиковые ОКНА**
*Немецкое качество*
Окна STAR
**6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного**
подробности по телефонам: 8-9603101816
*скидки до 35%*
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
*Окна стали дешевле...*


* * *

**Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăхсем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57. 5-5.**

* * *

**ТД «Лотос» реализует: профнастил, профили, трубы новые, б/у, трубы для ограды и ворот, краски, утеплители, поликарбонат, банные печи, мотоблоки. Монтаж систем отопления, изготовление теплиц, оград для полисадников. ВЫ ЗВОНИТЕ, МЫ ДОСТАВИМ! Тел.: 8-927-848-84-30. 5-5.**

* * *

**Куплю корову, бычка, телку, овец. Тел.: 8-905-342-39-43. 3-13.**

* * *

**Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Услуги экскаватора. Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15. 2-5.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 8-9.**

* * *

**Услуги буровой машины для рытья колодцев разного диаметра, с доставкой, установкой колец. Тел.: 8-903-379-09-01. 2-6.**

* * *

**Автоуслуги до 6 т. по республике и по России. Опыт работы. Цена договорная. Тел.: 8-903-065-58-68. 1-2.**

* * *

**Сумалли качакасемпе путеккисене сутатпăр. Тел.: 8-965-686-86-54.**

* * *

**Октябрьте пăруламалли хура тĕслĕ тынашки сутатпăр. Тел.: 8-937-394-42-14.**

* * *

**Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, песок речной, гравмассу, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 1-5.**

* * *

**Куплю дом с земельным участком. Недорого. Тел.: 8-987-577-66-41.**

**с 23 по 30 октября**

**Частица Мощей Святой Блаженной МАТРОНЫ МОСКОВСКОЙ**

**Частица Мощей Святителя НИКОЛАЯ ЧУДОТВОРЦА**

**Будут пребывать в с. АНАТ-КИНЯРЫ (ÇӲЛТИКАССИ) Чебоксарского района в Храме иконы Божией Матери «Владимирская» В эти дни будут совершаться ежедневные богослужения**

**Время работы храма: с 7.30 час. до 20.00 час.**

| | суббота 22 октября | | | | воскресенье 23 октября | | | | понедельник 24 октября | | | | вторник 25 октября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +6 | +5 | +8 | +4 | +3 | +3 | +5 | +4 | +3 | +3 | +5 | +3 | +1 | +1 | +3 | 0 |
| Давление мм | 751 | 753 | 753 | 754 | 753 | 751 | 749 | 748 | 747 | 748 | 751 | 753 | 754 | 755 | 755 | 755 |
| Влажность % | 95 | 92 | 65 | 74 | 84 | 78 | 86 | 90 | 95 | 98 | 88 | 86 | 92 | 86 | 64 | 68 |
| Ветер м/сек | З 3 | З 4 | З 5 | З 3 | Ю-З 4 | Ю-З 5 | Ю-З 6 | Ю-З 4 | С-З 2 | С 4 | С-В 5 | С-В 5 | С 4 | С 6 | С 6 | С 4 |
| Солнце восход/заход | | 07:38 | 17:36 | | | 07:40 | 17:33 | | | 07:42 | 17:31 | | | 07:44 | 17:29 | |
| Луна восход/заход | | 02:35 | 15:31 | | | 02:38 | 15:47 | | | 04:06 | 16:03 | | | 05:37 | 16:20 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | | | | | |

Орининти вăтам шкул коллективĕ кунта вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен директор çумĕн И.Г. Григорьевăн ашшĕ тата ОБЖ учителĕн А.М. Григорьевăн хуньашшĕ **Григорий Петрович ПЕТРОВ** вилсе кайнă пирки чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 2 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.**
**Пичете панă 21.10.2011 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4362.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.